# ПИРĔН ÇЫРУЛЛĂ КУЛЬТУРĂН ÇУЛĔ-ЙĔРĔ

1988 çулта пирĕн çĕршывра Руçа тĕне кĕртнĕренпе 1000 çул çитнине анлă палăртрĕç. Пин çул ĕлĕкрех, 988 çулта, Владимир князь пуçарнипе Киев Руçĕнчи славянсем христиан тĕнне йышăннă. Çакăнтан тытăнса христианство вырăс халăхĕпе патшалăхĕн официаллă тĕнĕ пулса тăнă.

Киев Руçĕ пуçласа христиан тĕнне йышăннă хыççăн православи чиркĕвĕ, вăтам ĕмĕрсенчех славянсен сапаланчăк вак княжествисене пĕрлештерме, халăхпа патшалăх пĕрлĕхне çирĕплетме, хуçалăхпа экономика никĕсне тĕреклетме, ют çĕртен вутпа-хĕçпе килнĕ тăшмансене хирĕç тухма, хаяр кĕрешÿре çĕнтерме (1240—1242 çулсенче Александр Невский нимĕçсемпе шведсене, 1380 çулта Дмитрий Донской тутар-монгол çарне аркатни, Кузьма Мининпа Дмитрий Пожарский ополченийĕ Мускава Польша панĕсенчен хăтарни (1611—1612) хавхалантарнă. Христиан тĕнне йышăнни славянсене (халĕ ĕнтĕ вырăссене) Византия патшалăхĕн культурипе паллашма, хăйсен çыруллă культурине пуçарса яма, ăна малалла аталантарма питех те меллĕ майсем туса панă.

Православи тĕнĕпе чиркĕвĕ, Раççейри вырăс мар халăхсене тĕне кĕртсе, пĕрлĕхлĕ патшалăх тăвас тесе, темиçе ĕмĕр хушши вăй хунă. Çулсем, ĕмĕрсем иртÿçĕн, истори урапи малалла кайнă май, христиан тĕнĕ Раççей патшалăхĕнчи тĕрлĕ чĕлхеллĕ халăхсем хушшине те тарăн тымар янă. Чăвашсене православи тĕнĕ майлă çавăрас тесе, чи малтан XIV—XV ĕмĕрсенче Чулхулари чиркÿ тÿри-шари ытларах вăй хуни паллă.

Тĕпрен илсен, христиан тĕнĕ Чăваш çĕрне IV Хаяр Иван патша хăйĕн вăйлă çарĕпе Хусан ханлăхне пăхăнтарнă, 1552 çулхи октябрĕн 2-мĕшĕнче Хусан хулине парăнтарнă хыççăнах сарăлма тытăннă. Хусана парăнтарнă хыççăн вырăссем хулара чиркÿ лартма тытăннă. Атăлпа Кама тăрăхĕнчи çĕрсене Аслă Мускав патшалăхĕ çумне пĕрлештерни вырăс, чăваш, мари, мордва, удмурт, тутар халăхĕсен хуçалăхпа культура çыхăнăвĕсемпе хутшăнăвĕсене аталанма май панă. Каярахпа вара чăваш çĕрне çывăх Чулхулапа Хусан хулисем вырăс патшалăхĕн администраци хулисем çеç мар, Атăлпа Урал хушшинчи вырăс мар халăхсемшĕн те культурăпа, çутĕç тата православи тĕнне саракан тĕп центрсем пулса тăнă. Чи малтанах кунта вырăс правительствипе чиркÿ тÿри-шари чăваш, мари, мордва, тутар халăхĕсене хĕçпе-пăшалпа хăратса, йывăр налуксем хурса, хăйсен çырусăр тĕн йăли-йĕркинчен пистерме, вăйпах христиан тĕнне йышăнтарма тытăннă. Ку тĕлĕшрен уйрăмах Чулхулапа (Халĕ Нижний Новгород) Хусан епархийĕсем ырми-канми ĕçленине палăртмалла. Вĕсем хура халăхран вăйпа пухса илнĕ укçапа ялсенче чиркÿсем тăва-тăва лартнă, чăвашла пĕлмен вырăс пупĕсем вĕсене, тем тĕрлĕ илĕртсе, тĕне кĕртме тытăннă. Ахаль те çĕр хĕсĕкрен аптранă, унтан тата хăйсен çырусăр тĕнне пăрахса, христиан тĕнне йышăнасшăн мар пулнă, вырăнти влаçсем хĕсĕрленине тÿсеймен чăвашсем, марисем, мордвасем, удмуртсем Атăлпа Урал тăвĕсем хушшинчи парлак çĕнĕ çĕрсем çине куçа-куçа кайнă. Чăваш халăхĕн урăхла шăпа пулма та пултарайман, мĕншĕн тесен XVI ĕмĕрте чăвашсем вырăс колонизаторĕсен хĕсĕк ункинче тăрса юлнă. Мускав правительстви, хăйĕн хĕвел туххăç енчи политикине пурнăçлама тесе, Чăваш çĕрĕ-шывĕ тавра Чулхула (1221), Васильсурск (1523), Сĕве (1551), Улатăр (1552), Шупашкар (1555), Чикме (1583), Чĕмпĕр (1648), Çĕрпÿ (1584), Етĕрне (1590), Теччĕ (1781) крепость-хуласем лартса тухнă. Вĕсенче пуринче те вырăнти лару-тăрăва сыхлама тĕрлĕ хĕç-пăшаллă çарсем тăнă, чиркÿсем тăва-тăва лартнă. Православи тĕнĕ йăли-йĕркине вырăнти халăх хушшине сарас, пропагандăлас тĕллевпе вырăс пупĕсем таврари чăваш ялĕсене те тухса çÿренĕ. Чăвашсем хăйсем ирĕккĕнех православи тĕнне йышăнмасса пĕлсе, вĕсем ялсене çар çыннисене е чаçĕсене илсе çÿренĕ. Тĕрлĕ хырăç-марăç тÿленĕ ĕçчен те сăпай чăвашсем крепоçсенчи çарпа чиркÿ тÿри-шарине ытлăн-çитлĕн тăрантарнă: тырă-пулă тăратнă, аш-какай, сĕт-çу туса панă.

Влаçсен йывăр пусмăрне тата вăйпа хăратса тĕне кĕртнине чăтайман чăвашсем час-часах пăлханнă, алла хĕç-пăшал тытсах кĕрешнĕ. Сăмахран, 1743—1744 çулсенче Çĕрпÿ, Етĕрне, Кăрмăш уесĕсенчи чăвашсем вырăнти влаçсемпе чиркÿ тÿри-шарине хирĕç час-часах çĕкленнĕ. Шупашкар хулине çывăх чăваш ялĕнчи хресченсем Шăмăш ял çынни Охатер Томеев ертсе пынипе Шупашкар уес администрацине хирĕç тухнă, хула воеводине хăратса тăнă.

Кирек хăш тĕн те (христианство, ислам, буддизм т. ыт. те) — патшалăх тытăмĕпе политикине çирĕплетме пулăшакан идеологи формиĕ. Вырăс правительствипе чиркÿ тÿри-шари чăваш пек халăхсене пурне те пĕр тĕн идейисене йышăнтарсан çеç Раççейĕн шалти пĕрлĕхне çирĕплетме, унăн хуçалăхпа оборона хăватне тĕреклетес ĕçе хутшăнтарма пулать тесе шутланă.

Священниксем малтанхи тапхăрта славянла, каярахпа вырăсла кала-



Тăван Атăл. — 1994 — 2 №

нă, вуланă кĕлĕсене, ӳкĕт сăмахĕсене (проповедьсене) чăвашсем ăнланман. Çав тĕп сăлтава пулах XVI—XVII ĕмĕрсенче чăвашсем хушшине православи тĕнĕн идейисем анлăн сарăлайман. Мĕншĕн тесен çав тапхăрта Чулхулапа Хусан епархийĕсем Христос вĕрентĕвне сăмах вĕççĕн, каласа-ăнлантарса туса пынă-ха. Чăвашсем çав-çавах хăйсен çырусăр тĕнне, çут çанталăкри вăйсен, çĕр çинчи ырăсен витĕмĕпе сăнарланнă туррисене асра тытса, çĕнĕ тĕн вĕрентĕвне ирĕккĕнех йышăнасшăн пулман, влаçсем вăйпа хăратса, ирĕксĕрлесе тĕне кĕртнине хирĕç тăнă, пăлханнă, чиркӳсене, вут тĕртсе, çунтарса янă, пупсене вĕлернĕ тĕслĕхсем те пулнă. Çакна чăвашсем 1667—1671 çулсенче Степан Разин тата 1773—1775 çулсенче Емельян Пугачев ертсе пынă хресчен вăрçисене хастар хутшăнни те аван кăтартса парать.

Православи тĕнĕпе чиркĕвĕ чăвашсем хушшине каярах юлса килнĕ пулин те, малтанхи тапхăрта вĕсене те, Киев Руçĕнчи славянсене Днепр шывне хăваласа шыва кĕртнĕ пекех, Сĕве, Çавал, Сăр, Кĕтне, Çарăмсан тата ял çывăхĕнчи ытти юхан шывсене хăваласа кĕртсе, хĕçпе-пăшалпа хăратсах. христиан тĕнне йышăнтарнă. Акă пĕр факт. Хальхи Самар облаçĕн Шигон районĕнчи Тайтак ялĕн пĕр урамĕнче чăвашсене тĕне хăçан тата мĕнле кĕртнине чысласа 160 ç. каялла лартнă виçĕ метр çӳллĕш гранит палăк ларать. Унта, чул çине картсах, акă, мĕн çырса хунă: «1829 года августа 30 дня на сем месте была поставлена полотняная церковь Ставропольского Калмыцкого войска. В тот же день были крещены преосвященным Филаретом, архиепископом Казанским и Симбирским, впоследствии митрополитом Киевским, и с протеиереями и иереями его епархии все жители деревни Тойдаково язычники-чуваши в число около 370 мужска, 360 женска пола в пруде речки Тойдаковки, в двух устроенных с плотины, особые для каждого пола крещенных. А 31 августа из них все, по-язычески женатые, в тоя деревни повенчены иереями соседних сел и их причтами». Çак церемоние чăвашран тухнă чи малтанхи священникĕсенчен пĕри, Мускаври тĕн академийĕнчен вĕренсе тухнă, Хусанти тĕн семинарийĕпе академийĕнче чăваш чĕлхи вĕрентнĕ, 1836 çулта пичетлесе кăларнă «Начертание правил чувашского языка» кĕнеке авторĕ В. П. Вишневский те хутшăннă, чăвашла кĕлĕсем каланă.

Атăлçи халăхĕсем христиан тĕнне ирĕккĕн йышăнасшăн пулманни вырăс правительствипе чиркӳ тӳри-шарине хытах пăшăрхантарнă. Вĕсен шучĕпе, чăвашсем, марисем, удмуртсем, хресчен вăрçисене хутшăнса, çапла пăлханни пĕтĕмпех вĕсем çĕнĕ тĕне ăпла хывса йышăнманран килнĕ имĕш.

XVIII ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринчен пуçласа, Атăлпа Кама тăрăхĕнчи халăхсене, çав шутра чăвашсене те, çĕнĕрен тĕне кĕртес тапхăр пуçланнă. Ку хутĕнче влаçсемпе чиркӳсем чее те ансат меслетсемпе усă курнă: çĕнĕрен тĕне кĕнисене хырăç-марăçран, салтака тытса ярасран хăтарнă, укçа-тенкĕ, тĕрлĕ парнесемпе çăмăллăхсем парса илĕртнĕ. Анчах ку тĕрлĕ меслетсемпе мелсем те пит пулăшсах кайман: чăвашсем çав-çавах хăйсем çырма-çатраллă вырăнти е лаштра йывăçлă вăрманти киремечĕсемпе çут çанталăкри хăватлă вăйсен (çил-тăвăл, шыв-шур, вут-кăвар, шалкăм çумăр, пăр çуни т. ыт. те) витĕмĕпе сăнарланнă туррисенех ĕненнĕ, çут çанталăкран ырлăх ыйтса, вĕсенех пуç çапнă, чӳк тунă.

XVIII ĕмĕрĕн иккĕмĕш çуррине вырăс правительствипе чиркӳ тӳри-шари Атăлçи халăхĕсене христиан тĕнĕ майлă çавăрас ĕçре вĕсен тăван чĕлхи хăватлă вăй пулнине тавçăрса илнĕ. Раççейре вырăссемпе пĕр патшалăхра пурăнакан чăвашсем, марисем, удмуртсем, тутарсем, мордвасем те Раççейĕн тĕп интересĕсенчен—пĕрлĕхлĕ патшалăх политикинчен, унăн хуçалăхпа экономика аталанăвĕнчен тата тĕн идеологийĕнчен ниепле те пăрăнса юлма пултарайманах. Вырăс колонизаци юхăмĕнче христиан тĕнĕ чи малта пынă.

Киев Руçĕ кӳршĕри Византийăран христианство идейисене йышăнни вырăс халăхне хăйĕн çыруллă культурине пултарма, ăна малалла аталантарма анлă çул уçса панă пулсан, çак пархатарлă ĕçре пăлхар просветителĕсем—Кириллпа Мефодий манахсем пуçарса янă славян çырулăхĕн пĕлтерĕшĕ питех те пысăк пулнă. Çавăн пекех, чăвашсене XVIII ĕмĕрте çĕнĕрен тĕне кĕртме тытăнни тутар-монгол пусмăрĕн вутĕнче пĕтнĕ авалхи çырулăх вырăнне Кириллпа Мефодий священниксем пуçарса янă çырулăха тĕпе хурса йĕркеленĕ чăваш наци çыруллă культурине пуçарса яма, ăна малалла, паянхи кун шайне çити аталантарма анлă çул уçса пачĕ.

Кашни халăха хăй чĕлхине тивĕçлĕ çырулăх кирлĕ, унпа усă курсан çеç, вăл хăйĕн çыруллă культурине аталантарма пултарать.

Чăваш халăхĕн çыруллă культури çинчен сăмах хускатсан, пирĕн вулакансем чи малтан аслă И. Я. Яковлев просветителе, унăн ĕçĕ-хĕлне аса илеççĕ. Хăшĕр вулакансем çапла шухăшланинче вĕсем тăван çырулăх историне тĕрĕс пĕлменни çеç палăрать. Чăннипе вара, И. Я. Яковлев халăха вĕрентес ĕçе пуçăниччченех пирĕн, чăвашсен, çыруллă культура тата кĕнекисем пулнă.

Çырулăхпа çыруллă культурăна пĕр-пĕринчен уйăрма çук. Пирĕн чăваш çырулăхĕпе çыруллă культурăн пуçламăшĕнче те христиан тĕнне йышăнни, ĕненнĕ. ăна халăх хушшине сарас тесе хастар ĕçленĕ уйрăм çынсем тăнă. Акă, сăмахран, 1755 çулта Наукăсен академийĕ М. В. Ломоносовăн «Российская грамматика» кĕнекине пичетлесе кăларнă. Тепĕр 14 çултанах, 1769 çулта, чăвашсен «Сочинения, принадлежащие к грамматике чувашского языка» ятлă кĕнеке пичетленсе тухнă. Ку вăл — Кириллпа Мефодий пăлхар священникĕсем туса хатĕрленĕ славян (вырăс) чĕлхин графикине тĕпе хурса йĕркеленĕ чăваш çырулăхĕн чи малтанхи пысăк палăкĕ, чăваш чĕлхи грамматики, шкул учебникĕ. Çак вăхăтран пуçласа, чăваш чĕлхи Раççейри ытти вырăс мар халăхсен чĕлхисенчен чылай маларах хăйĕн гражданлăх правине илнĕ тесе калама пултаратпăр. Унăн алçырăвне хатĕрлеме Хусанпа Сĕве епархийĕн архиепископĕ Вениамин Пуцек-Григорович (1706—1783) хастар хутшăннă, ăна 1768 çулхи мартăн 14-мĕшĕнче вăл Петербурга, Наукăсен академийĕн директорне В. Г. Орлов графа, пичетлесе кăларма тесе, ярса панă. Пичетлесе кăларма та вара М. В. Ломоносовăн вĕренекенĕсем тата ĕçтешĕсем пулнă С. Я. Румовскипе (1734—1812) И. А. Эйлер (1734—1800) академиксем хутшăннă.

Кĕнекери чăваш сăмахĕсен çырăвне тимлесе тишкерсен, унăн авторĕ чăваш чĕлхинчи сасăсене, тĕпрен илсен, вырăс чĕлхи графикинчи саспаллисемпе чуххăмăн палăртса çырнине асăрхама пулать. Сăмахран, грамматика авторĕ пирĕн тăван чĕлхери ă, ĕ, ӳ уçă сасăсене кашнинех хăйне уйрăм саспаллипе палăртайман, вĕсене вырăс чĕлхинчи уçă сасăсенчен уйăрмасăр а, ы, у, и, е, ю, я саспаллисемпе палăртнă. Халĕ эпир чăваш çырулăхĕнче пуçарса яма вырăс чĕлхи алфавитĕнчи саспаллисемпе усă курнă малтанхи авторсене пурне те стихийлă фонетиксем, чĕлхеçĕсем тесе тиркетпĕр; вĕсем чăваш чĕлхин сасă тытăмне, сасăсен сăн-сăпачĕпе пахалăхне тĕрĕс çырса кăтартма ăсталăх çитереймен. Апла пулин те, грамматика авторĕ чăваш чĕлхин 35 саспаллирен тăракан алфавитне тунă: вырăс чĕлхинчен 31 саспалли, латин чĕлхинчен пĕр саспалли g илнĕ. 3 саспаллие (іо — іоба (столб), іу — іуман (дуб), сь — сьорт (дом) М. В. Ломоносовăн «Российская грамматика» кĕнекинчи іо саспалли тĕслĕхне курса тунă. Çак грамматикăн авторĕ йĕркеленĕ чăваш чĕлхи алфавичĕпе пирĕн тăван çырулăхра çĕр çул ытла — XIX ĕмĕрĕн 70-мĕш çулĕсемччченех (1769—1870), паллă чăваш чĕлхеçи тата педагогĕ Н. И. Золотницкий 1866 çулта, чăваш халăх просветителĕ И. Я. Яковлев 1871 çул-

та чăваш çырулăхне хăшпĕр çĕнĕ улшăнусем кĕртсе улăштаричченех усă курнă, вырăсларан чăвашла куçарса, тĕн содержанилĕ çирĕме яхăн кĕнеке пичетлесе кăларнă.

Çапла вара, чăвашсене тĕне кĕртме тытăнни тăван чĕлхен чăваш обществинчи пĕлтерĕшĕпе вырăнне анлăлатма питех те меллĕ май туса панă: çырулăх пуçланса кайнă, чăвашла кĕнекесем тухма, шкулсем уçăлма пуçланă.

Христиан тĕнĕ çинчен вырăсла çырнă ансат содержанилĕ малтанхи кĕнекесене чăвашла куçарса кăларас, вĕсене халăх хушшине сарас тĕллĕнпе малтанхи вăхăтра ытларах Чулхулапа Хусан епархийĕсенчи чиркӳ тӳри-шари тăрăшса ĕçленине палăртмалла. Христиан тĕнĕн йăли-йĕрки çинчен ансат калаçу, ыйту-хурав меслечĕпе çырнă «Краткий катехизис» вырăсла кĕнекене чи малтан Чулхула тĕн семинарийĕнче вĕреннĕ, каярахпа Етĕрнепе Кăрмăш уесĕсенчи чăваш прихучĕсенче ĕçленĕ Ермей Иванович Иванов-Рожанский пастырь 1788 çулта чăвашла куçарнă. Ăна 1800 çулта Петербург архиепископĕ Амвросипе (1742—1818) Ярославль архиепископĕ Павел (1730—1816) иккĕшĕ синод кассине 30-шар тенкĕ хывса, хăйсен шучĕпе 600 экземпляр пичетлесе кăларнă. Ку вăл христиан тĕнĕ çинчен вырăсларан чăвашла куçарса кăларнă пĕрремĕш кĕнеке, çыруллă чăваш культурин пысăк палăкĕ шутлавать.

XIX ĕмĕр пуçламăшĕнче Атăлпа Кама тăрăхĕнчи халăхсен пурнăçĕнче, культуринче, çутĕçĕнче хăшпĕр паллă çĕнĕ улшăнусем пулса иртнĕ: тĕрлĕ чĕлхеллĕ халăха вĕрентес ĕçе çĕнĕлле йĕркелесе ярас шутпа 1803 çулта Хусан вĕренӳ округне туса хунă, 1804 çулта Хусанта университет уçнă. Çав вăхăтран пуçласа хальхи Чăваш Республикин территорийĕнчи ялсенче те шкулсем уçăлма тытăнаççĕ. Сăмахран, чи малтанхи шкула 1807 çулхи августăн 10-мĕшĕнче хальхи Вăрмар районĕнчи Пăртас ялĕнче, 1819 çулхи майăн 1-мĕшĕнче Хĕрлĕ Чутайра, 1819 çулхи ноябрĕн 2-мĕшĕнче хальхи Канаш районĕнчи Шăхасанта уçнă.

Çулсем иртсе пыруçăн, çав вăхăтри лару-тăру ыйтнипе чăваш ялĕсенче чиркӳсем, шкулсем чылай уçăлнă, вăрах пулин те халăхăн вĕренӳпе пĕлӳ шайĕ хăпарсах, халăхсен хушшăнăвĕ вăйлансах, çулсеренех ӳссе пынă. Çакă вара христиан литературине чăвашла ытларах куçарса кăларма хистенĕ.

Çавна май XIX ĕмĕрĕн пĕрремĕш çуррине Петербургра, Мускавра, Хусанта славянларан е вырăсларан чăвашла куçарнă тĕн содержанилĕ вунна яхăн кĕнеке пичетленсе тухнă. Вĕсенчен уйрăмах П. Талиев (1778—1832) куçарнă «Пичиксе катехизис, угерне чувашсам валли чуваш чильгипе, чибер билясжин тюре вырас законне и тора килли юланада» («Сокращенный катахизис, переведенный в пользу чуваш на чувашский язык, для удобнейшего им уразумения православного христианского закона с присовокуплением некоторых молитв, символ и десятислов», Москва, 1803, С. Элпидин куçарнă «Кюскя святой юмаге. Кюскя Катехизис» (Начатки христианского учения или краткая священная история и краткий катехизис», Казань, 1832), А. Алмазов куçарнă «Слово о христианском воспитании детей», Петербург, 1820), Н. Базилевский куçарнă «О цели Российского библийского общества», Петербург, 1820), А. Алмазов, С. Федоров, В. П. Вишневский куçарнă «Святой евангель Матфейран, Маркран, Лукаран, Иоанирендан чуваш чильги сине сявырса хоны» («Святое евангелие от Матфея, Марка, Луки и Иоанина на чувашский язык переведенное», Казань, 1820), Г. Акрамовскипе Г. Аристовский куçарнă «Кон святой порнызан, али хорав идю сине: епле ман святой борнас?» («День святой жизни или ответ на вопрос: как я должен жить по-христиански?» Казань, 1857), С. Элпидин куçарнă «Псалтирь» («Книга хвалений или псалтирь», Казань, 1858) тата ытти авторсем чăвашла куçарнă малтанхи кĕнекесене палăртмалла.

Асăннă кĕнекесен чĕлхипе стиль пахалăхне тимлĕн тишкерсен, акă мĕн асăрхама пулать: вĕсене пурне те чăваш чĕлхин тури диалектне тĕпе хурса куçарнă. Малтанхи куçаруçăсем—Е. Рожанский, П. Талиев, А. Алмазов, В. Вишневский, С. Элпидин, Е. Акрамовский, Т. Аристовский, Н. Базилевский — пурте тури чăваш представителĕсем пулнă пулас: куçарусен чĕлхипе стилĕ — тури чăвашсен чĕлхи.

Малтанхи куçарусен чĕлхипе стилĕнче пысăк çитменлĕхсем чылай (çакна çӳлерех асăннă кĕнекесен чăвашла ячĕсене курсах асăрхама пулать). Кунта çакна та палăртмалла: чи малтанах куçаруçăсен ĕç меслечĕсем тĕрĕс пулманни, вĕсем чăваш чĕлхи грамматикин морфологипе синтаксис правилисене тĕплĕн пĕлменни (авторсен чĕлхи чухăнни, вырăс сăмахĕсене тивĕçлĕ чăваш сăмахĕсем суйласа илме, çĕнĕ сăмахсем тума пĕлменни, сăмахсен падеж, сăпат формисене тĕрĕс çырманни, предложенири сăмахсен çыхăнăвĕпе вырăнне уяманни т. ыт. те) кĕрет курăнать. Куçарасса та вĕсем, «турă сăмахне» пăсасран шикленсе, сăмахсен вырăс предложенийĕнчи йĕркипех, сăмах хыççăн сăмах (буквально) куçарнă.

Апла пулин те, çак ăнăççăр куçарусемпе 1800—1866 çулсенчи чăваш шкулĕсенче учебник вырăннех усă курнă. Çакна эпир хăй вăхăтĕнче чăваш шкулĕсене тĕрĕслесе тăнă Н. И. Золотницкий (1829—1880), В. К. Магницкий (1839—1901), И. Н. Ульянов (1831—1886) инспекторсен отчетĕсенчен те аван куратпăр.

XIX ĕмĕрĕн 50-мĕш çулĕсенчи çыруллă чăваш культурин аталанăвĕне ӳсĕмĕ çинчен сăмах хускатсан, уйрăмах 1853 çулта Хусан университечĕн типографийĕнче пичетлесе кăларнă «Чувашские разговоры и сказки» ятлă вырăсла-чăвашла кĕнекене палăртмалла. Вăл илемлĕ чăваш литературипе фольклорĕн чи малтанхи антологийĕ. Кĕнекене пĕрремĕш чăваш писателĕ С. М. Михайлов-Янтушпа (1821—1861) В. П. Громов (1813—1881) чĕлхеçĕ тата çутçанталăк сăнавçи пухса хатĕрленĕ, ăна Хусан университечĕн профессорĕ И. Н. Березин (1818—1896), хăйĕн укçипе пичетлесе кăларса, чăваш халăхĕн çыруллă культурине аталантарас тесе, калама çук пысăк тава тивĕçлĕ ĕç тунă.

Содержанийĕсене кура, «Чувашские разговоры и сказки» кĕнекере пичетленнĕ произведенисене виçĕ ушкăна уйăрса тĕпчеме пулать: пĕрремĕшĕ — С. М. Михайловăн вырăсла çырнă «Краткое этнографическое описание чуваш» ятлă пысăк очеркĕ, иккĕмĕшĕ — С. М. Михайловпа В. П. Громов пухнă чăваш халăх сăмахлăхĕн ытарайми тĕслĕхĕсем (халăх юррисем, юмахĕсем, ваттисен сăмахĕсем, çанталăкса сăнанисем, тупмалли е тупмалли юмахсем, шӳтлĕ сăмах çаврăнăшĕсем), виççĕмĕшĕ — чăваш халăх пурнăçĕпе историйĕ, йăли-йĕрки çинчен икĕ е виçĕ çын калаçнине çырса кăтартнă анлă диалогсем. Çакă кĕнекерен пуçланнă та чăн-чăн чăваш литературин çулйĕрĕ. Чи малтанхисем яланах пысăк хисепре, чыслă, сумлă.

XIX ĕмĕрĕн 60—70 çулĕсенче чăваш халăхне çутта кăларас, унăн çыруллă культурине малалла аталантарас тесе хастар ĕçленĕ çынсенчен пĕри Н. И. Золотницкий пулнă. Вăл, чăваш чĕлхи шкул чĕлхи, çыру чĕлхи, кĕнеке чĕлхи пултăр тесе, хăй вăхăтĕнче патша чиновникĕсемпе хытă кĕрешнĕ. 1867—1871 çулсенче Хусан вĕренӳ округĕнчи чăваш шкулĕсен инспекторĕ пулнă май, вăл чăваш çырулăхне хăшпĕр çĕнĕ улшăнусем кĕртнĕ: чăваш чĕлхин малтанхи 35 саспаллирен тăракан, 1769 çулхи грамматикăра йĕркеленĕ алфавитне улăштарса, çĕнĕрен ŏ, ӳ, г (арсŏри, ӳмюр, соган) саспаллисем кĕртнĕ, çырупа кĕнеке чĕлхине чăвашсен калаçу чĕлхине çывхартнă. Шкулсенче усă курма 1866 çулта «Сŏлдалык кнеге» календарь, 1867 çулта «Чуваш кнеге» букварь, 1875 çулта «Корневой чувашско-русский словарь» пичетлесе кăларнă.

Н. И. Золотницкий хăйĕн вĕренекенĕсем М. Дмитриев, Г. Филип-

нов, В. Якимов, В. Васильев, Н. Ефимов, А. Соловьев, В. Громов пулăшнипе христиан тĕнĕ, унăн йăлийĕрки çинчен вырăсла çырнă вунна яхăн кĕнекене чăвашла куçарса кăларнă, халăх хушшине сарнă. Вĕсенчен уйрăмах Н. И. Золотницкий куçарнă «Торра киль килэмелли сумахсэм» («Молитвенник», Казань, 1867), «Торра пось сяпмаллы зинчен сумах») «Поучение о поклонении богу», Казань, 1876), В. Васильев куçарнă «Тора корынна праздник синьчен сумах», Казань, 1871); «Христос вилимьрен чирльзэ туны» («Христос воскрес», Казань, 1871), Г. Филиппов куçарнă «Жития св. святителей христовых Гурия, Варсонофия и Германа, казанских чудотворцев, с прибавлением сведений о мученике-инородце Аврамии Багарском», Казань, 1874», «Тинэ кўрь-дэтьчень тынлантармаллы сумахсем» («Учение перед святым крещением», Казань, 1876) кĕнекесене асăнмалла.

Н. И. Золотницкипе унăн вĕренекенĕсем куçарса кăларнă кĕнекесен чĕлхипе стилĕ, чăваш çырулăхĕн малтанхи тапхăрĕнче тухнă кĕнекесемпе танлаштарсан, нумай енчен пахарах. Вĕсем малтанхи чăвашла кĕнекесен чĕлхипе стилĕнчи йăнăшсене, çитменлĕхсене шута илни курăнать: калас шухăша тивĕçлĕ сăмахсем суйласа илни, падеж тата сăпат формисене тĕрĕс çырни, предложенири сăмахсене тĕрĕс çыхăнтарни, сăмахсен предложенири вырăнне уяни лайăх палăрать. Вĕсем ун чухне вырăс чĕлхи витĕмĕнчен çав-çавах хăтăлайман пулин те, Н. И. Золотницкипе унăн вĕренекенĕсем чăвашла çырнă е вырăсларан куçарнă кĕнекесене чăвашсем ăнлансах вулама, çын вуланине итлеме юратнă. Вĕсен çак тĕрлĕ ĕçне халĕ XIX ĕмĕрĕн 60—70-мĕш çулсенче çырулла чăваш культури тунă ўсĕм тесе хакламалла. Н. И. Золотницкипе унăн вĕренекенĕсене çак пархатарлă ĕçре 1867 çулта Хусанта йĕркеленĕ ятарлă куçару комиссийĕ унăн малтанхи председателĕ, Атăлпа Кама тăрăхĕнчи вырăс мар халăхсене çутта кăларассишĕн тăрăшса ĕçленĕ Н. И. Ильминский (1822—1892) профессор хавхалантарса пынă.

Иртнĕ ĕмĕрĕн 70-мĕш çулĕсенче, пулас аслă просветитель И. Я. Яковлев чăваш çырулăх ĕçне тытăнсан, пирĕн çырулла культурăра чăн-чăн çĕнĕ самана пуçланнă. Чĕмпĕрти арçын ачасен гимназийĕн пиллĕкмĕш класĕнче вĕренекен вунтăхăр çулхи И. Я. Яковлев Н. И. Золотницкин «Сьӧлдалык кнеге» календарьне тивĕçлĕ хак парса, 1867 çулта «Симбирские губернские ведомости» хаçатра рецензи пичетлесе кăларнă. Унта пулас чаплă педагог çапла çырнă: «Аслă çулсенчен тата вырăнсенчен аякра пурăннă май, Хусанпа пирĕн кĕпĕрнери (Чĕмпĕр кĕпернин. — А. А.). Кăрмăшпа Пăва уесĕсенчи чăвашсем вырăс чĕлхипе çывăх паллашаймаççĕ. Çавăнпа та чăваш çынниве вырăсла çырнă кĕнекесем мар, «Сьӧлдалык кнеге» пек чăвашла çырнă кĕнекесем ытларах усă кўме пултараççĕ. Юлашкинчен эпĕ тата господин авторăн чăваш чĕлхинчи сасăсене вырăс саспаллийĕсемпе палăртас мелĕ пирки пĕр-ик сăмах каласшăн. Чăваш чĕлхинчи пур сасăсене те вырăс чĕлхинчи саспаллисемпе палăртма май килмест. Çавăнпа та эпĕ чăваш чĕлхинчи хăшпĕр сасăсене палăртма уйрăм çĕнĕ саспаллисем кирлĕ тесе шутлатăп. Чăнах та, господин автор кĕнекере хăшпĕр паллăсемпе усă курать, анчах вăл çав паллăсем мĕне пĕлтернине ăнлантарса памасть. Çавăнпа та вĕсен пĕлтерĕшне чăваш çынни тўрех тавçăрса илеймест», — тенĕ.

1870 çулхи кĕркунне, Хусан университетне вĕренме кĕрсенех, И. Я. Яковлев чăваш çырулăхне тĕпрен тўрлетсе, çĕнетсе улăштарас ĕçе тытăннă: 1871 çулта И. Я. Яковлевпа унăн юлташĕсем (В. А. Белилин, А. В. Рекеев, С. Н. Тимрясов, Т. П. Петров, И. И. Иванов, Д. Ф. Филимонов) чăваш чĕлхин 47 саспаллирен тăракан çĕнĕ алфавитне туса хатĕрленĕ. 1872 çулта, унпа усă курса, «Чăваш ачисене çырăва вĕренмелли кĕнеке» ятлă букварь пичетлесе кăларнă. Çакăнтан аталанса кайнă та ĕнтĕ И. Я. Яковлев пуçарса янă çĕнĕ чăваш çырулăхĕн кунçулĕ. Анчах çак алфавитпа çырура тата пичетре усă курма питех те кансĕр, ытлашши кăткăс пулнă: кашни хупă сасăн çемçелĕхне палăртма саспалли тăрне лартнă вертикаллĕ кĕске патаксем çырнă чух кансĕрленĕ, типографире кĕнеке пичетленĕ чухне вĕсем хуçăлса аптратнă. Хальхи чăваш чĕлхинчи ă, ĕ уçă сасăсене славян чĕлхинчи ъ, ь саспаллисемпе палăртнă.

1873 çул пуçламăшĕнче И. Я. Яковлев вырăс чĕлхинчи 17 саспалли çумне чăваш чĕлхинчи сасăсен хăйевĕрлĕхне палăртакан 8 саспалли хушса (ă, ĕ, ў, т, ъ, ç, л, ӈ), чăваш чĕлхи алфавичĕн 25 саспаллирен тăракан виççĕмĕш вариантне туса хатĕрленĕ, унпа усă курса, 1873 çултах «Чăваш кĕнеки» ятлă çĕнĕ букварь пичетлесе кăларнă.

Çапла ĕнтĕ, çĕнĕ чăваш çырулăхне тунă чухне И. Я. Яковлев пĕччен пулман. Ăна çырулла чăваш культуришĕн питех те пысăк пĕлтерĕшлĕ çак ĕçре Хусан университечĕн профессорĕсем Н. И. Ильминский (1822—1891), Н. Н. Булич (1824—1895), унтан тата Хусан тĕн академийĕн профессорĕ Г. С. Саблуков (1811—1880), университетра И. Я. Яковлевран пĕр çул маларах вĕренсе пынă В. А. Белилин (1852—1832) вырăспа ун чухне Хусанти крешĕн тутар ачисен шкулĕнче вĕреннĕ С. Н. Тимрясов (1850—1910), Чĕмпĕр чăваш шкулĕн малтанхи вĕренекенĕсем пулнă А. В. Рекеев (1848—1932), И. И. Иванов (1848—1900), Т. П. Петров (1843—1975), учительсем, Н. И. Ильминский ертсе пынă учительсен Хусан семинарийĕнче вĕреннĕ Д. Ф. Филимонов (1852—1938) нумай пулăшнă.

Каярахпа, çĕнĕ чăваш çырулăхне пуçлтарнă тапхăра аса илсе, Д. Филимонов çапла çырса хăварнă: «Эпĕ хама тăван халăха çутта кăларас ĕç пуçламăшĕнче тăма тўр килнĕшĕн телейлĕ тесе шутлатăп. Эпĕ, кăшт çеç пулин те, И. Яковлевпа пĕрле малтанхи чăвашла букварь, малтанхи куçарусем тума хутшăнтăм. Эпир хамăр халăхăн культура шайне мĕн чухлĕ те пулин çўлерех хăпартас тесе, питех те тимлĕ, тăван халăха ырă сунса, уншăн тўрĕ кăмăлпа ĕçлерĕмĕр, ĕçлени хамăршăн çеç усăллă пултăр темен», — тенĕ.

Чăваш чĕлхи алфавитне çĕнетсе улăштарнă хыççăн И. Я. Яковлев студент, Н. И. Ильминский профессор сĕнĕвĕпе килĕшсе, вырăсларан чăвашла куçарас ĕçе кўленнĕ. Çак ĕçе вăл чи малтан пĕр шухăшĕмĕтлĕ вĕренекенĕсене А. В. Рекеева, С. Н. Тимрясова, Д. Ф. Филимонова, Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕренекен ачасене хутшăнтарнă. И. Я. Яковлев хăй те нумай куçарнă, ыттисем куçарнине редакциленĕ. 1873 çулта «Начальное учение православной христианской веры» кĕнекене чăвашла «Чăн тĕн кĕнеки» ятпа куçарса кăларнă. Ку вăл И. Я. Яковлев куçарнă пĕрремĕш чăвашла кĕнеке. Сăмах май кунта çакна каласа хăварни те вырăнлă. Çак кĕнекене куçарса кăларнăшăн Çутĕç министерстви И. Я. Яковлева 800 тенкĕ гонорар панă пулнă. Анчах çав укçапа И. Я. Яковлев хăйшĕн мар, 1873—1874 çулсенче пичетлесе кăларнă букварьсемпе ытти тĕрлĕ кĕнекесем кăларнă чухне усă курнă.

Часах И. Я. Яковлев студент тĕнче литературин чи пысăк палăкĕн — темиçе вуншар кĕнекерен тăракан библин — уйрăм кĕнекисене чăвашла куçарса кăларма тытăннă. Ку вăл унччен никам туман калама çук пысăк ĕç пулнă.

Н. И. Золотницкипе И. Я. Яковлев куçарăвĕсен содержани пахалăхне пĕтĕмĕшле хакласа, 1877 çулта Н. И. Ильминский профессор каярахпа çапла каланă: «Çĕнĕрен чăвашла куçарас ĕçе Н. И. Золотницкий 1866 çулта тытăнчĕ. Вăл умлă-хыçлах букварь, кĕлĕсен пуххи, календарь тата темиçе кĕнеке кăларчĕ. Хăшĕсене вырăсларан хăй куçарчĕ, хăшĕсене — унăн вĕренекенĕсем. 1871 çулта Хусанта чăвашла куçаракан Яковлев хушаматлă тепĕр ĕçчен тĕп чăваш тупăнчĕ. Вăл, ĕçе ялан тĕплĕ тăваканскер, вырăсларан чăвашла куçарма та часах хăнăхса çитрĕ. Чăваш пулнă

май, вăл хăйĕн шкулĕпе пĕрле малашне те чăвашла куçарас тата тăван халăхне вĕрентес ĕçре паллă вырăн йышăнĕ. Юлашкинчен тата çакна та хушса каламалла: Н. И. Золотницкин тĕпчевĕсем ăслăлăхшăн хаклă ĕçсем шутланаççĕ пулин те, Яковлев куçарăвĕсем, унăннипе танлаштарсан, чылай пахарах та тĕрĕсрех», — тенĕ.

Чăваш халăхне çырулла христиан тĕнĕпе тĕплĕн паллаштарас тесе, И. Я. Яковлев библин «Çĕнĕ сăмах» пайĕнчи Матфей, Марк, Лука, Иоанн çырнă таса евангелисене чăвашла куçарма тытăннă.

Хусан университетĕнче вĕреннĕ çулсенчех вăл «Матфей çырнă таса евангели» (Хусан, 1873), «Маркпа Лука çырнă таса евангели» (Хусан, 1874), унтан каярахпа «Иоанн çырнă таса евангели» (Чĕмпĕр, 1879) уйрăм кĕнекен пичетлесе кăларать. Куçару ĕçĕн малтанхи тапхăрĕнче, паллах, И. Я. Яковлев хăй ытларах тăрăшса ĕçленĕ пулсан, кайран ăна Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче ĕçлекен çывăх юлташĕсем А. В. Рекеев, С. Н. Тимрясов, Д. Ф. Филимонов, В. Н. Никифоров, И. Д. Дормитонтов учительсемпе вĕренекенсем пулăшса тăнă.

Каярахпа куçарăван тертлĕ ĕçне тата И. Я. Яковлевăн куçару принципĕсемпе меслечĕсене аса илсе, А. В. Рекеев çапла çырса хăварнă: «Çĕнĕ чăваш алфавитне тунă хыççăн И. Я. Яковлев куçару ĕçне пуçăнчĕ. Вăл çак ĕçе питĕ юратса тытăнчĕ, мана та, ытти ачасене те вырăсларан чăвашла куçармашкăн вĕренме тимлесех сĕнчĕ. Малтанлăха эпир яка куçарма пĕлейместĕмĕр. Куçарусенче И. Я. Яковлев оригинал содержанине тĕрĕс упраса хăварма, яка чĕлхепе усă курма тăрăшатчĕ. Çавăн пек пултăр тесе, вăл хăй те питĕ асапланатчĕ, пире те асаплантаратчĕ. Куçараттăмăр та çапла евангелирен пĕр-пĕр сыпăка, ăна тепĕр хут вуласа тухса, тӳрлетсе тап-таса çырса хураттăмăр, вара хамăра пит лайăх куçарнă пекех туйăнатчĕ. Тепĕр кунне И. Я. Яковлев эпир куçарнине илетчĕ те кашни сăмахне, сăмах майлашăвне тимлесе вуласа тухатчĕ, пур çĕрте те йăнăш тупатчĕ, чĕлхи яка мар тесе тиркетчĕ».

1889 çулта И. Я. Яковлев маларах куçарнă Матфей, Марк, Лука тата Иоанн çырнă евангелисен уйрăм кĕнекисене пĕрлештерсе, Чĕмпĕрте пĕр кĕнеке хаплĕн пичетлесе кăларнă. Çак евангелиех И. Я. Яковлев 1891, 1897, 1900 çулсенче Чĕмпĕрте виçĕ хутчен пичетлесе кăларнă. Христиан литературине чăвашла куçарса кăларас ĕç аталанса пынăçемĕн И. Я. Яковлевпа унăн вĕренекенĕсем библин «Çĕнĕ сăмах» пайĕн ытти кĕнекисене те малалла куçарнă, Чĕмпĕртех пичетлесе кăларнă: «Святой Апостолсен ĕçĕсем» (1900), «Евангели тата св. апостолсен ĕçĕсем» (1900), «Святой апостолсен çырăвĕсем тата св. Иоанн малашлăха пĕлтерсе çырни» (1903) т. ыт. те. Кунта тата çакна та хушса каламалла: И. Я. Яковлев библин куçарнă кĕнекисене уйрăммăн е тата пĕрлештерсе, темиçе хут та пичетлесе кăларнă.

И. Я. Яковлев библин «Кивĕ сăмах» пайĕн уйрăм кĕнекисене те куçарнă. Кунта уйрăмах 1889 çулта Чĕмпĕрте пичетленсе тухнă «Сирах ывăлĕ Иисусăн ăслăлăх кĕнеки», «Иисус Новин кĕнеки», «Товит кĕнеки», «Руфь кĕнеки», «Маккавейсен пĕрремĕш кĕнеки» куçарăвĕсене асăнмалла.

1906 çулта Чĕмпĕр чăваш шкулĕ çумĕнче ятарласах христиан тĕн литературине чăвашла куçарса пропагандăлакан комисси ĕçлеме тытăннă, ăна И. Я. Яковлев хăй председатель пулса ертсе пынă, куçарусен пахалăхне хăй тĕрĕслесе тăнă.

Куçару комисси ĕçне тĕрлĕ çулсенче тĕрлĕ авторсем хутшăннă. Кунта уйрăмах Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче ĕçленĕ, вырăс чĕлхипе чăваш чĕлхин сăмах пуянлăхне, икĕ чĕлхен сăнарлă илемне, грамматикине лайăх чухлакан, православи тĕнĕн законĕсене ăста пĕлекен хастар çынсен пысăках мар ушкăнĕн йывăр та сумлă ĕçне палăртмалла. И. Я. Яковлевсăр пуçне, Куçару комиссийĕн ĕçне Д. Ф. Филимонов, А. В. Рекеев, С. Н. Тимрясов, П. В. Васильев, А. П. Петров-Туринге, М. П. Петров-Тинехпи, И. Е. Степанов, В. М. Михайлов, К. П. Прокопьев, В. Н. Никифоров, Ф. Д. Дмитриев, И. О. Дормитонтов, Ф. Д. Данилов тата ытти учительсемпе священниксем хутшăннă.

И. Я. Яковлев ертсе пыракан куçару комиссийĕн ĕçĕ пурăна-киле çырулла чăваш культурин чăн-чăн шкулĕ пулса тăнă. Чăваш халăхĕшĕн пархатарлă çак ĕçе И. Я. Яковлев аслăрах классенче вĕренекен чĕлхе тути-масине аван чухлакан ачасене те хутшăнтарнă.

1907 çулхи мартра пулса иртнĕ забастовкăна хутшăннăшăн шкултан кăларса янă пĕрремĕш класри 37 ачаран виççĕшне Константин Иванова, Николай Васильева (Шупуççыннине. — А. А.), Петр Осипова, шкулта вĕреннĕ чухнех хăйсен чĕлхепе литературăри пултарулăхĕпе палăрнă ачасене, çав çулах, кĕркунне, куçару комиссийĕнче ĕçлеме чĕнсе илнĕ.

Чĕмпĕре таврăнсан, К. В. Ивановпа каллех тĕл пулнине аса илсе, Н. В. Васильев-Шупуççынни поэт çапла йĕркесем çырса хăварнă: «Чĕмпĕре эпĕ 1907-мĕш çулхи октябрĕн 17-мĕшĕнче каçхине çитрĕм. Константинпа тепĕр забастовщик Петр Осипов ятлă юлташ эпĕ пынă чух шкул библиотекинче пурăнатчĕç. Эпĕ вĕсем патĕнче çĕр каçрăм. Эпĕ пырсан, забастовка çинчен асăнсан, иртнĕ кунсен «ырлăхне» мухтаса илтĕмĕр. Тĕрлĕ турă кĕнекисене куçаракан комисси хушнипе Константин библин тахăш юррине куçарса ларатчĕ. Тепĕр кунне каçхине пире, Константинпа иксĕмĕре, Иван Яковлевич хăй патне чĕнтерчĕ. Унтан вара манăн чĕлхесăвар çаврăнăшĕ мĕнле иккенне тĕрĕслеме мĕн те пулин çырса пама хушрĕ. Эпĕ вара Лермонтовăн «Казак майрин сăпка юррине», «Тавлашу», «Виçĕ пальма» сăввисене куçартăм. Константин Лермонтовăн «Сăрт тăррисем», «Парăс», «Чул ту», «Тĕрме çынни», «Пирĕшти» сăввисене куçарчĕ. Куçарнă япаласем Иван Яковлевич кăмăлне кайрĕç. «Сирĕн чăваш халăхĕ валли библи куçарас ĕçе те манма юрамасть, тăрăшса ĕçлес пулать», — тесе ăсатса ячĕ.

Константин библи куçарнă çĕртех Лермонтовăн «Иван ĕмпӳпе унăн тарçи Киребеевич тата паттăр хуça Калашник çинчен хунă юрра» куçарса пачĕ. Ку юрра вăл питĕ вирлĕ, питĕ тĕрĕс сăнлăхсем кăтартакан чĕлхепе куçарнă. Вара Иван Яковлевичăн кăмăлĕ пушшех çемçелчĕ те, вăл Лермонтов сăввисене пĕр брошюра туса пичетлесе кăларчĕ. Ку кĕнеке 1908 çулхи çуркунне тухрĕ».

И. Я. Яковлев хăйĕн талантлă вĕренекенĕсене библин чылай кĕнекисене чăвашла куçарма, редакцилеме явăçтарнă, анчах ун чухне кĕнеке куçарас-кăларас ĕç хальхи вăхăт шайĕнче пулман пирки, хăш автор библин хăш пайне, хăш-хăш кĕнекине куçарнине ятран çырса палăртман. Куçару комиссийĕ хăйĕн пĕтĕм ĕçне И. Я. Яковлев ячĕпе туса тăнă. Çавăнпа та халĕ ниепле те: библин ку кĕнекине, ку сыпăкне К. В. Иванов куçарнă тесе, пат татса калама пултараймастпăр, мĕншĕн тесен ун чухнехи йĕркепе пулас кĕнекен алçырăвне хатĕрлес тата ăна пичетлесе кăларас ĕçе пĕр çын — И. Я. Яковлев ячĕпе туса тăнă, унашăн вăл аслăрах влаçсем умĕнче пĕччен ответлă пулнă.

Хăйĕн чăваш халăхĕ умĕнчи тава тивĕçлĕ пысăк ĕçне аса илсе, И. Я. Яковлев 1919 çулхи ноябрьте В. И. Ленин патне янă çырăвĕнче çапла каланă йĕркесем пур: «Çырулăх тунă хыççăнах эпĕ, литература чĕлхине аталантарса, библин «Çĕнĕ сăмах» («Новый завет»), «Кивĕ сăмах» («Ветхий завет») пайĕсен кĕнекисене, турăсемпе святойсем çинчен çырнă, кĕлĕ кĕнекисене чăвашла куçарма тытăнтăм. Çав хушăрах вырăссен пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан, ăспа ĕçе вĕрентекен, хресчен халăх кăмăлне тивĕçлĕ произведенийĕсене, истори калавĕсене те куçартăм.

Росси аннепе пĕрле пулман пулсан, язычниксемпе магометансем хушшинче пурăнакан пĕчĕк чăваш халăхĕ, хутăшса кайса, пачах пĕтнĕ пулĕччĕ. Çавăнпа та эпĕ пуçарса янă шкулăн тĕп задачисен-

Савандей Якурě* Чěмпěрте 1918 çулта библи кěнекине пěтěмпех чăвашла пичетлеме чарнăшăн кулянать. Вăл калать: «Библи ěненекен чăвашшăн та, ěненмен чăвашшăн та усăллă пулěччě, ăна пичетлесе кăларни чăваш литературине малалла яма пулăшěччě», — тет.

Чăвашла библие пичетлесе пěтерсе, ăна кун çути кăтартма ěмěтленсе, И. Я. Яковлев Халăх комиссариачěн председателěнчен В. И. Ленинран та пулăшу кěтнě-мěн. 1919 çулхи ноябрěн 12(25) мěшěнче янă çырура вăл акă мěн çырнă: «Çирěп ěненсех, шансах тăратăп: чăваш халăхне çутта кăларас ěçěн хальхи йывăр та чирлě лару-тăрăвě часах иртсе кайě. Хама чăвашсене вěрентес тěлěшпе тăвакан пур тěрлě ěçрен хăтарнă пулин те, эпě уйрăм çын шучěпех хам аллă çул ěлěкрех тытăннă пысăк та чыслă ěçе — библин «Кивě сăмах» («Ветхий завет») пайěнчи кěнекесене малалла куçарма шутларăм...

Хисеплě Владимир Ильич, мана хута кěрсемěр, çěнě куçарусем туса, халě те тěттěмрен тухайман чăваш халăх ырлăхěшěн ěçлеме ирěк парсамăр. Манăн çак ыйту Сире тивěçтерсен, Чěмпěрте ятарлă Уйрăм комисси тăвасчě. Унăн ěçне ытларах Чěмпěр чăваш шкулěнче вěреннě, анлă пěлӳ илнě çынсене хутшăнтарасчě. Комисси, манăн куçарусене тěрěслесе, тěплěн сӳтсе явнă пулěччě. Эсир манăн ыйтăва ырласса шанса, эпě çакăн çинчен çырса пěлтерме хамăн тивěçěм пур тесе шутларăм», — тесе йăлăннă. Анчах унăн библие пěтěмпех чăвашла куçарса кăларас ěмěчě туллин пурнăçланиман пулин те, вăл хăй вăхăтěнче мěн тума пултарнине пěтěмпех турă.

Çěнě чăваш çырулăхне пултарнă И. Я. Яковлевпа унăн вěренекенěсем пěтěм чăваш халăхě ăнланакан литература чěлхи тăвас тесе нумай тăрăшса ěçленě. Çак пархатарлă ěçе вěсем чăваш халăх сăмахлăхěн паха тěслěхěсене пухнипчен тата вырăс литература классикěсен паха произведенийěсене, библи кěнекисене куçарнинчен тытăннă.

Вырăсларан чăвашла куçарас ěçе И. Я. Яковлевпа унăн вěренекенěсем ăнăçлă пуçарса янă. Вěсем, тăван халăха аслă вырăс халăхěпе çывăхлатас, христиан тěн ěненěвне çирěплетес пěлӳпе культура шайне хăпартас тěллевпе революцичченех 50 çул хушши тăрăшса ěçлесе, чăвашла 700 кěнеке ытла кăларнă, тăван халăх хушшине сарнă, вěсенчен 70 процентě вырăсларан куçарнисем пулнă. Чěмпěрти чăваш шкулěнче вěренекенсене вырăс литература классикěсен паха произведенийěсемпе паллаштарас тесе, И. Я. Яковлевпа унăн çывăх вěренекенěсем нумай вăй хунă: вырăс чěлхипе литератури тата турă законě Чěмпěрти учительсен семинарийěпе ялти шкулсенче тěп предметсенчен пěри пулнă. Унта А. Пушкин, М. Лермонтов, А. Кольцов, И. Тургенев, Н. Гоголь, Л. Толстой, А. Чехов тата ытти писательсен хăшпěр произведенийěсене вěреннě, библин чăвашла куçарăвěсене вуланă.

И. Я. Яковлев куçару ěçне Чěмпěр шкулне тěрлě çěртен вěренме пынă чăвашсене, ялти учительсене хутшăнтарнă, пултаруллă тăлмачсен самаях пысăк ушкăнне вěрентсе хатěрленě.

Халăха вěрентес ěçне çырулăх ěçě аталанса пыни çыру, кěнеке, калаçу чěлхисене нормăлама пулăшнă. Уйрăмах вěсем куçарусен чěлхине пур енчи чăвашсемпěн те ăнланмалла тăвас тесе нумай вăй хунă. И. Я. Яковлевпа унăн вěренекенěсем куçарусен алçырăвěсене тимлесе тěрěсленě, чěлхине витěмлě те яка тума тăрăшнă. Çавна май вěсем куçарусен чěлхине, аякри ялсене кайса, халăх умěнче вуласах тěрěсленě. Çакă та чăваш литература чěлхине аталантарма, унăн нормисене çирěплетме пулăшнă. Çакна эпир чаплă поэтăмăр К. В. Иванован И. Я. Яковлев тăрăшнипе 1908 çулта Чěмпěр чăваш шкулě 40 çул тултарнă тěле кăларнă «Чăваш халапěсем» кěнекере пичетленнě «Нарспи» поэмипе «Тимěр тылă», «Тăлăх арăм» балладине вуласан куратпăр.

Кун хыççăн И. Я. Яковлевпа Чěмпěрти чăваш шкулě тăрăшнипе (çырулăх туни, шкулсенче чăвашла вěрентни, шкулсем валли учительсем хатěрлени, чиркӳсенче кěлěсемпе ӳкěт сăмахěсене чăвашла вулама ирěк пани т. ыт. те) анатри диалект чěлхи, тури диалект чěлхиччи сăмахсемпе, формăсемпе пуянланса, пур енчи чăвашсене те ăнланмалла чăн-чăн литература чěлхи пулас çулпа аталанса кайнă, унăн тěрлě стилěсем вăй илчěç, çав шутра илемлě литература стилě те йěркеленсе çитрě. Чи кирли, чи пахи — пирěн тăван чěлхен обществăри вырăнěпе пěлтерěшě ӳсни.

Пирěн тăван çырулăх никěсěнче те славян çырулăхěн графика системи тěпре выртать. Вăл 1100 çул ěлěкрех славян просветителěсем Кирилпа Мефодий пуçарнă çырулăх никěсě çинче çуралса, паянхи шая çити аталанчě.

Çакăн пек ěнтě çыруллă чăваш культурин кěске историйě

Андрей АЛЕКСЕЕВ

* Савандей Якурě — Савандеев Георгий Степанович (1889—1949) 1917 çулта коммунистсен партине кěнě, Чěмпěрти çар гарнизонěнче службăра тăнă вăхăтра хулара Совет влаçне çирěплетессишěн хастар кěрешнě, «Çěнě пурнăç» хаçата редакцилесе тăнă, партин Чěмпěр губкомěн национальноçсем енěпе ěçлекен пайěн заведующийě, унтан Чěмпěр кěперне Совечěн халăха вěрентес ěç пайěн заведующийě, ВКП(б) Чěмпěр кěперне комитечěн членě тата Чăваш секцийěн председателě, Хěвелтухăç фрончěн Чăваш уйрăмěн политпай заведующийě пулнă